артистсем кăтартса парайман сăнарăн хăш-пĕр енĕсене М.Мурзакова шыраса тупнă. Мурзакова – Графиня оперăра характер нумай енлĕхне кăтартать. Пĕрремĕш курăнура вăл çиллес те мăкăрти карчăк, тăваттăмĕш картинăра – хăрушла этем, çав вăхăтрах тата питĕ хăравçă çын иккен. Тепĕр тĕлте тĕлĕнмелле сивĕ мăнаçлăх. Унпа пĕрлех хăйне евĕрлĕ чиперлĕхпе сапăрлăх йĕррисене те тупать. Çак оперăрах артистка тата икĕ роль вылять: Полина тата Гувернантка.

Юлашки çулта вăл тата икĕ оперăра хăйĕн пултарулăхĕпе тĕлĕнтерчĕ. А.Моцартăн «Свадьба Фигаро» оперинче Марцелина – кăсăкла роль. Урăх чĕлхепе ăна характерлă парти теççĕ. Кулăшла, хăйĕн ĕçĕпе тарăхакан хĕрарăм.

Тепĕр парти – М.Мусоргский çырнă «Борис Годунов» оперăри Шинкарка – хупах хуçи. Ку роль те тĕлĕнмелле ăнăçлă пулса тухрĕ. Сасси, çулсем иртнĕ пулсан та, тап-таса, çамрăк чухнехи тембрпа шăрантса тухать.

М.Мурзакова чăваш композиторĕсен оперисенче, оперетгисенче, музкомедисенче хăйне евĕр кăсăк сăнарсем тупать.

Ф.Васильевăн «Шывармань» оперинче вăл – Чакак, «Анаткасра» оперетгăра – Улюкка (тĕлĕнмеле кăсăк сăнар ăсталарĕ вăл кăштах катăкрах хĕр ролĕнче). А.Асламасăн «Айтар» оперинче вăл – Пинерпи, Г.Хирбюн «Нарспи» оперинче – Нарспи амăшĕ тата Элексĕ. Чăвашла спектакльсенче юрланă партисем çинчен чи ырă сăмахсемпе çеç асăнса хăварас килет.

Хальхи вăхăтра театрта çамрăксем чылай. Вĕсен йышĕнче ят-сум илме ĕлкĕрнĕ чаплă юрăçсем сахал мар. М.Мурзакова çамрăксемпе алла-аллăн тытăнса ĕçлет, кирлĕ çĕрте пулăшса, канашсем парса хавхалантарать вĕсене. Вĕсен шутĕнче – М.Мокшанов, К.Ефремов, В.Смирнова, М.Еланова, С.Ефремов, Л.Яковлева, В.Николаев, С.Рыбакова тата ыттисем.

Миçе тĕрлĕ концерт программи туман-ши тата юрăç çак çулсенче? Шучĕ те çук. Ялсенче, район центрĕсенче, хуласенче, патшалăх шайĕнчи пысăк уявсенче унсăр концерт иртмен. Яланхи концертмейстерĕпе Алиса Агакова-Суринова пианисткăпа пĕрле вĕсем юлашки вăхăтра темиçе хутчен те тĕн юррисен концертне иртерчĕç. Итлекенсем хапăл туса ăшшăн йышăнчĕç, пысăк хак панчĕç сав юрă каçĕсене.

Юрăçă хăйĕн ăсталăхне ăшпиллĕн çамрăк ăрава парса хăварасшăн. Унăн вĕренекенĕсем музыка училищинче, педагогика университетĕнчи музыка факультетĕнче, Чăваш патшалăх университетĕнчи вокал кафедринче çителĕклех. Вĕренсе тухнисем профессилле хорсенче солистсем пулса ĕçлеççĕ.

М.Мурзакова юрăç хальхи вăхăтра та Оперăпа балет театрĕнче чи кирлĕ, кĕтнĕ ĕçтеш шутланать. Нумай çул хушши çут ĕмĕтлĕ çулăр утнăçемĕн уçăлса пытăр, ăнăçу та хисеп сире, Мария Егоровна!



Хветĕр АГИВЕР

# ЧĂВАШ ХАЛĂХĔ ТАТА МИÇЕ ÇУЛ ПУРĂНĔ?

## Г.Федоровăн «Ĕмĕр чиккисен ани...» статйине /«Т.А.», 2005, 8№/ сӳтсе яватпăр

Чăваш пурнăçĕпе çыхăннă кашни çынна çак ыйту пăшăрхантармасăр тăма пултараймасть. Нумай-нумай пултаруллă çынна канăççăрлантарнă вăл. Калапăр, Раççейри халăх йышĕн юлашки çыравне пăхсан, чăваш йышĕ çĕр пин ытла чакнă. Ку вăл, ахăртне, хăйсене чăваш тесе çыртарнисен йышĕ. Çыртарманнисем тата, урăх халăх йышне ирĕлнисен йышĕ тата миçе пин-ши? «Эпĕ чăваш!» тесе, кăкăра çапса ӳлĕме ĕмĕтленсе пурăнмалли хĕпĕртĕвĕ çукрах ĕнтĕ.

Хальлĕхе чăваш чĕлхи те, литератури те пур-ха. Темиçе çул каярах чăваш чĕлхипе çапăнакан хаçат-журналсем çĕр пине яхăн тухаканнисем те пурччĕ. Çавăн чухне Беларусь литература кунĕсене иртнерме килнĕ писательсем пирĕн тиражсене пĕлсен шалт! тĕлĕннĕччĕ. Хăйсен вĕсен тиражĕсем ун чухне виçĕ-тăватă пин еннелле кăна капашатчĕç. Халĕ хамăра çавнашкал хĕрхӳ шăпа килсе çапрĕ иккен. Çакă пысăк инкек вăл чăваш хăйĕн пуласлăхĕпе пач ĕçлеменнине кăтартса парать. Тытса чарайăпăр-и çак анаталла юхăма?

Эпир, чăвашсем, хамăрăн чăваш ачисене чăваш ятпа мăн кăмалланма вĕрентейместпĕр. Эпир хамăрăн историе те пăтти-патти кăна пĕлкелетпĕр. Чăваша чăннипе питпе çавăрнаймастпăр. Мĕнле халăх иккенне пĕлес тесен, паллах, унăн авалтан килекен историне те лайăх пĕлмелле. Халăхăмăр этемлĕх çуралнăранпах, ахăртне, пурăнать вĕт-ха. Эппин ун историйĕ те пуян. Кун пек пăшăрханса калаçни Чăваш Президенчĕн çуллен калакан Сăмахĕнче те пурччĕ... Мĕнмĕн кирли, мĕн-мĕн çукки-çитменни пирки темĕн тăршшĕ çырса кайма пулать. Çĕннине тума пайтах вăхăт кирлĕ. Халĕ эпĕ, çыравçă пулсан та, тĕксĕм шухăшсемпе пурăнатăп. Культура шайĕ анса ларнă – хаçат-журнал тиражĕсем ячĕшĕн кăна: халăхне кирлĕ мар пулса пыраççĕ вĕсем. Ачи-пăчи чăвашла мар, вырăсла вуласа, ют çĕршыв савăнăçĕпе çитĕнет; халĕ ĕмĕртен пирĕн тĕле çителенĕ халăх йăли-йĕрки сӳнсе ларнăпа пĕрех, пулсан та вĕсем историллĕ декорацисем вырăнĕнче кăна, пĕр-пĕр ятарлă уяв тĕлне. Капла пурăнса эпир хамăра хамăр чухăнлататпăр, ха-

мăр пуянлăха хамăртан хамăр вăрлатпăр. Мĕншĕн чăвашăмăршăн чăваш чунĕпе ĕçлемелле мар кашни чăвашăн? Раççей çĕршывĕн Чăваш енĕ вĕт ку! Хальлĕхе чăваш халăхĕн ыран пурăнаслăхĕ питĕ тĕтреллĕ. Çĕр çинчен çухалса пыракан халăхăн çыравçисем пулĕ ĕнтĕ эпир? Çав телейсĕр шăпана хамăр пурăннă чухнех курас марччĕ...

«Статьям вĕçĕнче çакна калам. Проза ани раснах философилĕх патне туртăнчĕ, ĕмĕрхи ыйтусене хускатма кăмăлларĕ», – тет хисеплĕ профессорăмăр Георгий Федоров, чăваш прозине пахаланă май, çыракансене кирлĕ чылай паха пĕтĕмлетӳсем туса. Халăхĕ анаталла çул тытнă май чăваш литературине тĕпчекенсем те юлмарĕç темелле. Çав ĕçри кулленхи ыйтусене хускатакансем пушшех те. Тавах Георгий Иосифовича,тĕпчевлĕ çак хура ĕçре чакаланма ӳркенменшĕн. Ĕлĕкрех ку ĕçе пайтах хутшăнакан пурччĕ. Чухлатăп-ха, ку ĕç – пархатарсăр ĕç: ни укçи, ни сумĕ темелле.

Халăх халсăрланса, йăшса çитнине кам малтан сисĕмлет? Паллах, çыракан çын. Çавăнпа, ахăртне, хайлавсенче тӳпемпех вилĕм, масар, пăтрав, ӳлĕмсĕрлĕх, пӳклелĕх. Çакна, ман шутпа, çыракан çын сисĕмлесе кăна çыраять, яр! курса тăрса, чĕри хĕссе килнĕ шайĕпе çырмасть. Пурнăçпа вилĕм категорийĕ вăл хăех философиллĕ категори. Çавăнпах, ахăртне, чылай авторăн хайлавĕсем философиллерех курăнаççĕ пулĕ. Тĕрĕссипе, вĕсенче чун тарăхăвĕ çеç, выртса макăрас вырăнне. Пирĕн тĕслĕхлĕ произведенисем пур. Хисеплĕ ят илме тивĕçнисен те, ытларах тивĕçменнисен. Чап чирĕ вăл кĕрлеттерсе кăна пырать ку чухнехи литература хутлăхĕнче, вĕсене мĕншĕн пуç çапмалline пĕлейместĕн тулĕк. Мĕнле ăсталăха вĕренмелле-ши вĕсенчен? Хисеплĕ ят девальвацийĕ ĕнтĕ ку. Хăйсене чыс тунă халăхĕ ячĕпе унăн хутне кĕрсе çыраясчĕ хăть пĕр-ик япала. Ку юрĕ-ха, тем мар. Лайăх çырнă япала, ăста алли тахçанах паллă. Халăхĕ пурăнсан пурăнать вăл.

Чăваш литературинче питĕ хальччен пулман япала вулас килет. Философиллĕ хайлав та ан пултăр вăл, «пулмасла, пулма пултарайман эпизод-событие сăнлани» те ан пултăр вăл, чĕлхи те, вăхăчĕ те, çынни те пултăр çав япалара, этеме пурăнма виççе панă çĕр савăнăçĕ те, çĕр пӳкли те пултăр çав япалара. Пурăнас килтĕр çав хайлава вуласан, чăтăмлă пулас килтĕр. Мĕнле илемлĕх мелĕсемпе çырса кăтартмалла иккенне ăна ăсти хăй пĕлет.

Георгий Федоров статйинче тахçанхи статьясенчи пек çыракана ăс вĕрентсе калани çук, писателĕн хăйĕн пултарулăхĕнчен тухса пыракан пулăмсене тĕпчени вырăнлă. Патшалăх ĕçĕнче вăй хунă хушăрах такама та вулама ĕлкĕрнĕ иккен вăл. Ӳркенмен. Менторла сасси çук. Ку вăл, паллах, унăн ĕçĕха. Писателе хăйне усăллă пулĕ-и вăл ӳлĕмхи ĕçĕнче – ку вăл урăх калаçу. Паллах, Георгий Иосифович чăваш прозинче юлашки çулсенче мĕн шăтса тухнине тĕпчет. Тĕпрен илсен, урăх литература витĕмĕпе пиеленнĕ произведенисем урлă мар, чăваш пурнăçĕ çуратнă хайлавсен хăйсен хакĕпе тĕшĕклет, çав литературăн тĕпеле килнĕ шухăшне палăртать. Чăваш литературин пулăм вĕççĕн çеç ларас вăхăчĕ, чăн та, хыçа юлчĕ пулмалла. Малалла еплерех çĕкленĕ литературăмăр, сăнарлă кунăмăр? Вăл, паллах, тăван чăваш мĕнлерех аталанса кайнинчен те нумай килĕ. Тата писателĕн хăйĕн пысăк, тарăн, сарлака пĕлĕвĕнчен. Тата тăван литература мулĕ çине тĕревленнинчен. В.Рзай, С.Ялавин, Ю.Скворцов тата ыттисен пултарулăхне ăша илнинчен.

Георгий Федоровăн ыйтуллă хайлавне тĕсесерех вулатпăр. «Чикĕ вăл – хушă, ик ен хушшинчи шырлан, – тенĕ унта. – Çеçпĕл те çаплах мар-и вара? XIX-XX ĕмĕрсен чикки (хушши) тĕлне пулнă ун трагедиллĕ шăпи. Тĕнче кĕç шырлан пулса çурăлса каяс тĕлте тăнă вăл, эпохăн арканас, ишĕлес хăватне пĕтĕм шăпипе, чĕррĕн, ыратуллăн туйса. Паянхи роман-повсеть, калав-новелла та çав шырланлăхăн таппине сисĕмлĕн туйса илчĕ, ăна ĕмĕрхи пурнăç хакĕлĕ ишĕлсе анни пек хакласа йышăнчĕ. Парадокс мар-и вара? Тăтăш сăнарланнă Вилĕмпе Масар кун-çулăн пиншер çул тарăнăшĕнчен килекен сăвапĕ патне тавăрчĕç этеме. Йывăррăн, тертлĕн ăсласа илет герой çак лару-тăрăва, пысăк çухатусене лексе. Çĕнĕ шанăçпа мал ĕмĕтлĕ перспектива ансат та çăмăл тупăнмаççĕ иккен, вĕсене пĕтĕм пурнăç тăршшĕпех шырамалла».

Черетлĕ шырлан урлă каçса тепĕр ĕмĕре кĕтĕмĕр.Иртнĕ ĕмĕрти пек тĕнче кĕç шырлан пулса çурăлса каяс хăрушлăх çук халь, паллах. Сĕнекен илемлĕ пурнăçра тĕссĕрленме хыпаланакан чăваш халăхĕ çывăх вăхăтра ирĕлсе пĕтес хăрушлăх пур вара. Пирĕн тĕллевĕмĕр – çав йăтăнса аннă хăрушлăха сирсе яма пулăшасси, ăна паянхи роман-повеçсенче, калав-новеллăсенче илемлĕх мелĕсемпе çивĕчлетсе кăтартасси, сăнарлăхпа витĕмлесе суккăррисен куçĕсене уçасси. Литература – куçлă тĕлĕнтермĕш. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, Исландири кашни çын кунĕпе хăй мĕн ĕçленине, киле таврăнсан, шурă хут çине çырса хурать. Ахăртне, çавăнпах-тăр çак çĕршывра литература енĕпе тухнă Нобель премийĕн лауреачĕсем те чылай. Аксиома: литература вăйлă пулсан, халăхĕ те вилĕмсĕр. Халăхне вилĕмрен хăтарса хăвартăмăр-тăк ĕмĕр чиккисен анинче тĕттĕм каç мар, сутă кун кăна пулĕ, ун чухне Георгий Федоров асăннă статйинче çапла калани те тӳрре килĕ: «Литературăмăр пур, пурăнать, çине тăрсах çĕнĕ стиль, çĕнĕ сăнарлăх шырать, анчах ĕмĕрхи эстетика пулăмĕсене те сая тумасть вăл».

Эппин вăй патăр, чăваш халăхĕ!